Георгий Орлов

## Тавах çĕршывăма

1

Тавах сана: пур килĕштернĕ ĕçĕм,
Çывхартĕ вăл хитре тĕллевĕме;
Эп – гражданин, савнап çак ятшăн вĕçĕм,
Унра куратăп чăн телейĕме;

Умри çул-йĕрĕм илĕртӳллĕ, анлă,
Пур вăйăм тӳррĕнех утма ялан;
Кашни çынпах юлташлă эп, пĕр танлă,
Чĕнеççĕ ăшшăн: «Хаклă тус», «Тăван»;

Хăпартланса, ырми юрлать халь чунăм,
Çĕн ырлăхăн уççи те ман хамрах,
Шанатăп: тĕксĕмленмĕ çутă кунăм,
Ăна валли мĕн кирлĕ – пур йăлтах.

Çакна пурне те эс, çĕршывăм, патăн.
Çитет-ши тӳлесе татма хăватăм?

2

Кив сурпанне варкăштарса, мана
Анне килтен ăсатрĕ те çула,
Тĕнче хĕрнех çитерчĕ самана,
Тĕл пулчĕ темĕн тĕрлĕ ял-хула;

Эп чăтрăм ытлăнах хаярлăха,
Ĕнентĕм çирĕп туслăхăн вăйне,
Хальхи майлах – нихçан вăрахлăха
Каймарĕ асăмран атте-анне.

Çав хаклă ик ятпа пĕрлех, пĕр тан,
Кирек-ăçта та – йывăр кун килсен,
Телей шевли çиçсессĕн те – ялан,
Çĕршывăм, шухăшларăм сан çинчен,

Мĕн-ма тесессĕн пĕтĕм ĕмĕре,
Атте-анне пек, эс те ман пĕрре.

*Орлов, Г. Тавах çĕршывăма / Г. Орлов // Ялав. – 1976. – № 11. – С. 16.*